# ИГОРЬ АЛЕКСЕЕВ:
## ЧĂВАШТЕТ ТЕМ ПУЛСАН ТА АТАЛАНĔ



**Пирĕн досье**

Игорь Тутарстанри Тайпеҫ районне кĕрекен Кӳлпуҫ ялĕнче ҫуралнă. Хусанти патшалăх технологи университетĕнче вĕреннĕ. Кăҫалхи авăн уйăхĕнче Шупашкара куҫнă. Шăллĕ, Саша, Тутарстанри Апас ялĕнче 11-мĕш класра вĕренет, йăмăкĕ, Олеся, Хусанта ĕҫлет.

**Паян информаци вăхăтра илни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Пур халăх та ăна хăйĕн чĕлхипе илесшĕн. Чăваш интернечĕ те — ЧĂВАШТЕТ — ҫакна май туса парать, вăл аталанса пырать. Паян сире ăна аталантаракан, чăвашлăхшăн ҫунакан Игорь Алекссевпа паллаштарăпăр.**

**— Игорь, чăваш интернечĕ ҫинчен каласа парăр-ха?**

— Чăваштет — интернетри чăваш атмосфери. Вăл аталанса пырать, ҫĕнĕ проектсем уҫăлаççĕ. Калăпăр чăваш Википеди — интереслĕ те кăсăклă проект. Чăваштетпа ĕҫлекенсенчен Николай Плотников программиста асăнма пулать. Вăл Чулхулара ĕҫлет. Виктор Бычко /**вăл Reflejo никпа чăваш интернетĕнчи канашлăва тухать**/ Америкăра пурăнать пулин те Чăваштета аталантарас тесе чунне парса тăрăшать.

**— Эсир халĕ мĕнле проектсемпе ĕҫлетĕр?**

— Кĕҫех Ашмаринăн вэб-словарĕ пурнăҫа кĕрĕ. Вăл чăвашла-акăлчанла, вырăсла-чăвашла, чăвашла-вырăсла, акăлчанла-чăвашла пулĕ. Ытти словарьсем те кун ҫути курĕҫ.

**— Сирĕн пушă вăхăт пур-и?**

— Пачах та ҫук. Халĕ ҫӳллерех асăннă сăмахсарпа ĕҫлетĕп.

**— Сирĕн компьютер ҫинче мĕнле скринсейвер?**

— Симĕс фон. Вăл куҫа ывăнтармасть.

**— Эсир юлашки мĕнле ҫитĕнĕве асăнма пултаратăр?**

— Чăваш хастарĕсене, чăвашлăхпа ĕҫлекен ҫынсене gmail.com ҫинче электрон ещĕкĕсене йĕркелесе патăм.

**— Чăваш шкул ачисене мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

— Шкул ачисене килти ĕҫсене тума, рефератсем ҫырма Википедипе усă курма ыйтатăп. Чăваш форумĕнче те активлă пулмалла.

Чăваштетра халĕ 3 GB таран чăваш музыки, чăваш кĕнекисен электронла варианчĕсем, чăваш шухăшĕ. Ҫак пуянлăх хушăнсах пырать.

# ТĔРЛĔ ЧĔЛХЕЛЛĔ ПĔЛӲ БАНКĔ

**Википеди — тĕрлĕ чĕлхеллĕ ирĕклĕ энциклопеди. Чăваш чĕлхи уйрăмĕ 2004 ҫулхи раштав уйăхĕнче уҫăлнă. Энциклопедире 5 000 ытла чăвашла ҫырнă статья. Чăваш википедийĕ cv.wikipedia.org адреспа вырнаҫнă.**

Википеди проект 2001 ҫулта уҫăлнă. Вăл информаци шыравне питĕ ансатлатнă тата ансатлатса пырать. Википеди тĕнчери чи пысăк энциклопедисенчен пĕри.

1995 ҫулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче Уорд Каннингхем wiki системăна никĕслесе янă, wikiwikiweb ятлă сайт уҫнă. Wiki wiki гавай чĕлхинче «хăвăрт» тени пулать. Wikiсистемăн тĕп принципĕсенчен пĕри унпа пурте усă курма пултарни. Wiki тетĕлсенчен нумайăшĕ регистраци процедурине ыйтмаççĕ. Унпа усă куракан страница ҫинче тĕрĕс маррине курсан, е информацие хушса ҫырма шут тытсан «редакцилес» тӳме ҫине пусса улшăнусем кĕртме, вĕсене сыхласа хăварма пултарать. Ҫавăн пек ҫăмăллăхпах ҫĕнĕ страницăсем хушăнаççĕ, киввисенчен тасалаççĕ.

Паллах, ҫавăн пек уҫăнлăх тĕрлĕ хулигансене те илĕртет. Вĕсем страницăсене пĕтерме, вĕсене пăсма пултараççĕ. Анчах та wiki системăра пĕтĕмпех мĕнле пулнă ҫавăн пекех каялла таврма пулать. Вандала вара




администратор wiki тетĕле тек кĕртмĕ.

Wiki страницăсене йĕркелеме ятарлă html гипертекст разметкине вĕренме кирлĕ мар.

Wiki шухăш Джимми Уэлса тата Ларри Сэнгера 2001 ҫулхи кăрлачăн 15-мĕшĕнче Wikipedia проекта никĕслеме хавхалантарнă.

*Википеди — этемлĕх пĕлĕвĕн чи пысăк банкĕ. Вăл 250 чĕлхепе йĕркеленсе пырать. Вĕсенчен 119 чĕлхе активлă. Пĕтĕмĕшле статьясен шучĕ — 2,6 миллиона яхăн.*

Википеди — этемлĕх пĕлĕвĕн чи пысăк банкĕ. Вăл 250 чĕлхепе йĕркеленсе пырать. Вĕсенчен 119 чĕлхе — активлă. Пĕтĕмĕшле статьясен шучĕ — 2,6 миллиона яхăн.

Википедире информацие шырама ҫăмăлтарах пултăр тесе ăна Викисловарь /Wiktionary/, Викивĕренӳ кĕнеки /Wikibooks/, Викицитатник /Wikiquote/, Викитека /Wikisource/, Викисăнар /Wikispecies/, Викихыпар /Wikinews/, Викисклад /Wikicommons/, Метавики /Meta-wiki/ ҫине пайланă.

Википеди пуласлăхĕ сиртен те килет. Хăвăр пĕлнине ҫынсене те пĕлтерме пултаратăр.

Чăваш Википедире «Хыҫалти парта» хаҫат ҫинчен те информаци пур.

Калăпăр, сирĕн сочинени, реферат ҫырмалла е мĕн те пулин ҫинчен пĕлес килет. Ҫак информацие википедире тупма, ăна тĕрлĕ чĕлхепе вулама пулать. Чăваш пурнăҫĕ, ĕҫĕхĕлĕ ҫинчен чăваш википедийĕ каласа парать. Калăпăр, сире акатуй е чăваш тĕнĕ ҫинчен пĕлес килет. Тархасшăн, шырава кĕрсе ҫак темăсене уҫатпăр та вулатпăр. Питĕ ансат та питĕ меллĕ.

Туссем, чăваш википедийĕпе усă курăр!